26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ЯНВАРЬ
25
ЫТЛАРИКУН
17(6512) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ГОВОРОВА

Ленинград фронтĕнчи çарсем, äйăслă наступлени туса пырса, паян, январĕн 24-мĕшĕнче, тăшмана çапăрса илмелли аста маневр туса тата фронтран çав тери хăвăрттăн атакăласа, ПУШКИН хулине (ЦАРСКОЕ СЕЛО) тата ПАВЛОВСК хулине (СЛУЦК)—пысăк чугун çул узелĕсем тата нимĕçсен оборонин хăватлăн тĕрекленĕтнĕ пунктĕсем пулса тăракансене—тытса илчĕç.

ПУШКИН тата ПАВЛОВСК хулисене тытса илессишĕн пынă çапăçусенче МАСЛЕННИКОВ генерал-полковникăн, ХАЗОВ генерал-майорăн, БУНЬКОВ генерал-майорăн, ЯСТРЕБОВ генерал-майорăн, ВВЕДЕНСКИЙ полковникăн çарĕсем, артиллери генерал-майорĕ МИХАЛКИНАН, МАСЛОВСКИЙ полковникăн артиллеристчĕсем тата ГРДЗЕЛИШВИЛИ подполковникăн танкисчĕсем тава тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене «ПУШКИНСКИ» тата «ПАВЛОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награждăлама тăратас.

Паян, январĕн 24-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕршыв тăвата тупăпа пуннĕ хут пĕр харăс персе, ПУШКИН тата ПАВЛОВСК хулисене тытса илнĕ хăмăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Пит чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пырса мĕнпур çарсене, ПУШКИН тата ПАВЛОВСК хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пырса выртнă геройсене ĕмĕрĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН

1944 çулхи январĕн 24-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

КРАСНОЕ СЕЛО хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшмана çапăçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра ТРУДОВИК, ПЕРЕЯРОВО, ВОЛКОВИЦЫ, НИСКОВИЦЫ, БОЛЬШОЕ ОНДРОВО, КАСТИНО, ПИТКЕЛЕВО, КУЯДУЗИ, ВОДИЛОВО, КЕЗЕЛОВО, ЮЛЯ-ПУРСКОВО, ПОКИЗЕН-ПУРСКОВО, БОЛЬШАЯ ИСТИНКА, ТАИЦЫ, НОВАЯ ПУДОСТЬ, ВАЙЛОВО, МАЛОЕ ПЕГЕЛЕВО, АЛЕКСАНДРОВСКОЕ, ЗАЙЦЕВО, КОБРОВО, ПЕНДОЛОВО, КОМОЛОВО, БАБОЛОВО ятлă ялсене тата ТАИЦЫ, ИЖОРА ятлă чугун çул станцийĕсене.

ТОСНОРАН сурçĕртерехре тата сурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра ОТРАДНОЕ, РОЖДЕСТВЕННО, ПЕРЕВОЗ, ВОСКРЕСЕНСКОЕ, ЗАХОЖЬЕ, ВОЙТОЛОВО, ПУХОЛОВО, СИГОЛОВО, СОЛОГУБОВКА, ЛЕЗЬЕ, ПЕТРОВО, ТУРЫШКИНО, МУЯ, СТАРОСТИНО, ЕРЗУНОВО, БЕЛОГОЛОВО, МАЛУКСА, БЕРЕЗОВКА, ШАПКИ ятлă ялсене тата ПЕЛЛА, СОЛОГУБОВКА, ТУРЫШКИНО, МАЛУКСО ятлă чугун çул станцийĕсене. Пирĕн çарсем КИРИШИ—МГА—ЛЕНИНГРАД чугун çулне тăшмантан пĕтĕмпех тасатнă.

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем хулара хĕвеланăçнерехри вăрмансенче тăшмана юлашки ушкăнĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса ЗАКЛИНЬЕ, СУТОКИ, ДУБНЯ ятлă ялсене тата ТАТИНО ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

КАЛИНКОВИЧИ хулинчен сурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем темиçе ял тытса илнĕ, вăл шутра МАРМОВИЧИ, ЛЕСЕЦ, СОЛОВЕЙКА, ДУБНЯКИ, ПЕРЕКРУПОВСКИЙ ВОРОТЫНЬ, КАПЛЕЦКИЙ ВОРОТЫНЬ, КРОТОВ ятлă ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 45 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ÿкернĕ.

ЯНВАРĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем КРАСНОЕ СЕЛО хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ, вăл шутра МАЛОЕ ЖАБИНО, БОЛЬШОЕ ЖАБИНО, ВЯЙЗЕЛЕВО, БОЛЬШИЕ ТУГАНИЦЫ, МАЛЫЕ ТУГАНИЦЫ, МУТТОЛОВО, АККОЛОВО ятлă ялсем.

ТОСНОРАН çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куç са пынă, НИКОЛЬСКОЕ, НОВАЯ ДЕРЕВНЯ, ГЕРТОВО, ИВАНОВО, КИРСИНО, СТАРОСТОВО, КАНТУЛИ, НИЧЕПЕРЦ, НУРМА ятлă ялсене, 2-мĕш УЛЬЯНОВСКИ ПОСЕЛОКА тата ПУСТЫНЬКА ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

КИРИШИРЕН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, БЕЛОВО, КОСТОВО, ИВАНОВСКОЕ, ВАСЬКИНЫ НИВЫ, СМЕРДЫНЯ, БАСИНО, ДУБОВИК, ЛИПОВИК, БЕРЕЗОВИК, МЕЛЕХОВО, МЕНЕВША, КУРНИКОВ ОСТРОВ, ЗЕЛЕНЦЫ, ЛЕЗНО, ВОДОСЬЕ, ПЕХОВО ятлă ялсене тата ТИГОДА ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ. Пирĕн çарсем, татăклăн атакăласа, нимĕçсен ВОЛХОВ шывĕн хĕвелтухăç енчи ГРУЗИНО районĕнчи плацдармне пĕтерсе тăкнă.

НОВГОРОД хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем темиçе ял тытса илнĕ.

МОЗЫРЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса Полесье облаçĕнчи ЛЕЛЬЧИЦЫ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата ПЕРЕДРЕЙКА, ОСОВЕЦ, СКОЛОДИНА, ОСТРОЖАНКА, УБОРТСКАЯ РУДНЯ, ЗАРУБАНЫ, БУЙНОВИЧИ, СВИДНОВ, МАНЧИЦЫ, ЗЛОДИН, ВЕТВИЦА, СИМОНОВИЧИ ятлă ялсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, тăшмана хирĕç артиллерипе минометсемпе персе тăнă тата чылай участоксенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 21 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Красное Село хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман вут-çулăм тăкса хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сире-сире ярса, темиçе ял тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 11 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă, 32 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Вяйзелево ялĕ районĕнче пирĕн çамăллăн куçса çÿрекен чаçсем тăшман пехотине пĕр батальон вĕлерсе пĕтернĕ, танксене пемелли 12 тупă пĕтерсе тăкнă тата тăшман салтакĕсене тыткăна чылай илнĕ.

* * *

Тоснорaн çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла куçса пынă, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Тăшман хушăри позицисенче чарăнса тăма хăтланни ăнăçуллă пулман. Совет пехоти, артиллери пулăшса пынипе нимĕçсене çав тери хăвăрттăн пыра-пыра çапса, вĕсене хăваласа янă, тăшманăн нимĕн йĕркипе тăрантарса ҫапăҫма ҫук. Çав çапăçусенче гитлеровецсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем тăшман оборонин вăйлă çирĕплетнĕ узелне тытса илнĕ те нимĕçсен 400 автоматчикне ытла пĕтерсе тăкнă, вĕсен пĕтĕм хĕçпăшалне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем Пустынька ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ те, çитĕневе вăйлатса пырса, гитлеровецсен пĕр батальонне аркатса тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Киришиpен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман вăйлă çирĕплетнĕ оборонине çĕмĕрсе тăкса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пирĕн çарсем, татăклăн атакăласа, нимĕçсен Волхов шывĕн хĕвелтухăçĕнчи Грузино районĕнчи плацдармне пĕтерсе тăкнă. Кăялда чакакан тăшман тупăсем, пулеметсем тата минометсем нумай, боеприпассемпе тата çар пурлăхĕн темиçе складне пăрахса хăварнă.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн соединени чаçĕсем хаярлă çапăçусем хыççăн нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборона пунктне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли юлнă. Пирĕн çарсем тата персе çĕмĕрнĕ 8 танка тĕрса юлнă. Хăй тĕллĕн çÿрекен 2 тупă, 14 хир тупи тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Пирĕн подразделенисем вăрмантри гитлеровецсен 2 ротине çаврăнса илсе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Мозырь хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, партизансем активлăн пулăшнипе, Полесье облаçĕнчи Лельчицы ятлă район центрне хÿтĕлесе тăракан нимĕçсен гарнизонне аркатса тăкнă. Çав яла йышăнса илнĕ май пирĕн боецсем трофейăсем тытса илнĕ, тата тыткăна илнисем те пур. Кавалери чаçĕсем тăшмана темиçе ялтан хĕссе кăларнă. Пĕр пункта йышăнса илнĕ чухне совет кавалерисчĕсем нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити тураса тăкнă. Ялпа тата ăна çывăх çимĕç склачĕсем, тĕрлĕ вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ пысăк обоза тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн авиаци Баренц тинĕсĕнче тăшманăн 6.000 тонна таякан судноне шыва путарнă.

* * *

Николаев облаçĕнче кĕрешекен партизансен «Амăрткайăк» ятлă отрячĕ январь уйăхĕн пуçламăшĕнче нимĕç гарнизонне тапăннă та 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Одесса облаçĕнче кĕрешекен партизансем январĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен лагерĕ патне çын курми пырса тухнă та, лагерь хуралĕнче тăракан гитлеровецсене пĕтерсе тăкса, тыткăнри 418 красноармеецпа мирлĕ граждана ирĕке кăларнă. Ирĕке тухнă совет патриочĕсем пурте партизансен отрядне кĕнĕ.

* * *

Нимĕçсен 14-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 11-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Герман Вальд çапла каласа кăтартнă: «Нумай пулмасть эпĕ Германие кайса килтĕм. Çавăн чухне эпĕ Берлин çине бомбăсем тăкнине куртăм. Поезд Силези вокзалĕ патне çитсе тăрсан, тăшман авиацийĕ хулана тапăнма пытăнни çинчен пĕлтерчĕç. Эпир убежищĕне тарса пытантăмăр, вара унта 3 сехет лартăмăр. Каçхине эпĕ ытти салтаксемпе пĕрле тепĕр поезд çине ларас тесе Ангальски вокзала кайрăм. Трамвай тата çĕр айĕнчи чугун çул, çÿреме май пулман пирки, чарăнса ларнă. Йĕри-тавра вут-çулăм кăна шавлать. Ангальски вокзалта поездсем те çÿреме чарăнни çинчен пĕлтĕмĕр, мĕншĕн тесен чугун çул кĕперĕсене ишсе пĕтернĕ, Берлин чугун çул узелĕ пачах йĕркерен тухнă пулнă. Берлинри халăх хуларан тухса тарать. Предприятисем нумайĕшĕ ĕçлемеççĕ. Берлин хулине малалла та хальхи пекех тапăнса пырас пулсан, Берлинри пурнăç пачах пĕтсе ларать».

В. И. Ленин вилни 20 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ траурлă чаплă лару

Енер, январĕн 21-мĕшĕнче, Мускавра, Кремль двоpецĕн Пысăк залĕнче В. И. Ленин вилни 20 çул тултарнă ятпа ВКП(б) Центральный Комитечĕн, ВКП(б) Мускав область комитечĕпе Мускав горкомĕн, СССР Верховный Совет тата РСФСР Верховный Совет Президиумĕсен, Ĕçсынни депутачĕсен Мускав область тата Мускав Совечĕсен, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн, ВЛКСМ Мускав область комитечĕпе Мускав горкомĕн, ВЦСПС президиумĕн, партипе общество организацийĕсен тата Хĕрлĕ Çарăн представителĕсемпе пĕрле чаплă лару пулса иртнĕ.

6 сехет те 50 минутăра Президиум сĕтелĕ патне Сталин, Молотов, Калинин, Каганович, Андреев, Микоян, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский юлташсем пырса тăраççĕ. Траурлă чаплă ларăвăн участникĕсем вĕсене тăвăллăн алă çупса хавасланса кĕтсе илеççĕ.

— Сывă пултăр Сталин юлташ!

Пурте çав тери хавасланса Сталин юлташпа унăн çывăх юлташĕсене тата вĕсем урлă Ленин—Сталин партине, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăри çĕнтерÿсене организацилесе тата хавхалантарса пыраканскерсене, саламлаççĕ. Хăватлăн «урра» кăшкăрни янăраса каять, вăл нумайччен чарăнмасăр алă çупнă сасăсемпе тата савăнса саламланă сăмахсемпе шĕрлешсе янăраса тăрать.

М. И. Калинин юлташ траурлă чаплă лару уçăлни çинчен пĕлтерет.

— Паян Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 20 çул тулчĕ,—тет Калинин юлташ.—Унăн ятне ура çине тăрса хисеплеме ыйтатăп.

Пурте ура çине тăраççĕ. Шăплăхăн çак минучĕ чаплă та çав тери тарăн пĕлтерĕшлĕ! Пурте Сталин юлташ еннелле пăхаççĕ. Ăна, Ленин ĕçне чаплăн малалла туса пыракана, Ленинăн совет халăхне çĕнтерÿсем тума ертсе каякан ялавне çÿле йăтса пыракана, пурте ывăлĕ тăван ашшĕне юратса хисепленĕ пек хисеплеççĕ.

«...Чăн çул аслă Ленин кăтартрĕ пире.
Пире аслă Сталин ĕçе хавхалатрĕ,
Хастар ситĕнтерчĕ, вĕрентрĕ тÿрре».

Государство гимнĕн çак питех те чаплă сăмахĕсене çав минутăра Кремль двоpецĕн Пысăк залĕнче пулнисем кашниех хăйсен асĕнче каласа тухнă.

М. И. Калинин юлташ А. С. Щербаков юлташа доклад тума сăмах парать. Лару участникĕсем ăна нумайччен алă çупнипе саламласа ăшшăн кĕтсе илеççĕ.

Щербаков юлташăн яр-уçă, тарăн содержанилле докладне питех те пысăк тимлĕхпе хумханса итлеççĕ.

Хăйĕн докладне вĕçлесе, Щербаков юлташ лăпланса ларассине тата каппайса ларассине хирĕç кĕрешме тата халăхăн мĕнпур вăйне, пирĕн çарăн мĕнпур вăй-хăвачĕпе искусствине фашистла захватчиксене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатнă çĕре мобилизацилеме чĕнет. Сталин юлташ çĕнтерÿ çапăçмасăр пулмасть, çĕнтерĕве ăна çапăçса туянаççĕ, тесе кăтартса панисем докладчик сăмахĕсенче çĕнĕ вăйпа янăраççĕ.

Щербаков юлташ пирĕн çĕршывăн, пирĕн халăхри ертсе тата организацилесе пыракан вăйсем çинчен — большевикла парти çинчен, хамăр çулпуçăмăр Сталин юлташ çинчен питех те çĕкленсе çапла калать:

— Ленинăн чи çывăх юлташĕ, унăн вилĕмсĕр вĕрентĕвне малалла аталантарса пыракан, Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ пирĕн çарпа халăха тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерме, пирĕн тĕрĕслĕхлĕ ĕçе çиеле кăларма ертсе пырать!

Сывă пултăр ленинизм, пирĕн çапăçусенче тĕрĕсленнĕ шанчăклă ялав! Эпир çак ялавпа çĕнтерсе пынă, малашне те çĕнтерсе пырăпăр!

Сывă пултăр Совет халăхĕ, халăх—герой, халăх—воин!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕ!

Сывă пултăр пире татăклă çĕнтерÿ патне ертсе пыракан Сталин юлташ!

Пурте ура çине тăраççĕ те Сталин юлташа хисеплесе алă çупаççĕ. Тăвăллăн алă çупни, саламласа кăшкăрнисем пирĕн халăх аслă Сталина юратнине тата пĕтĕм чĕререн таранине тепĕр хут хăватлăн кăтартса параççĕ. Лару участникĕсем, ура çине тăрса, парти гимне—«Интернационал» юрлаççĕ.

М. И. Калинин юлташ траурлă чаплă лару хупăннă, тесе пĕлтерет. (ТАСС).

В. И. Ленинăн ÿтне сыхласа хăварас тĕлĕшпе наукăллă питĕ паха ĕç тунăшăн наукăн тава тивĕçлĕ деятельне Борис Ильич ЗБАРСКИЙ профессора Сталинла премии парасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

В. И. Ленинăн ÿтне сыхласа хăварас тĕлĕшпе наукăллă питĕ паха ĕç тунăшăн наукăн тава тивĕçлĕ деятельне Борис Ильич Збарский профессора 150 пин тенкĕлĕх пĕррĕмĕш степень Сталинла премии парас.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН
СССР Совнаркомĕн Ĕç ĕçсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи январĕн 21-мĕшĕ.

И. В. Сталин юлташ Чойбалсан маршала йышăнни

Январĕн 22-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Монголи Халăх Республикин премьер-министрне Чойбалсан маршала йышăннă.

Калаçура Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ тата Совет Союзĕн Монголи Халăх Республикинчи посланникĕ И. А. Иванов юлташ пулнă.

Хĕрлĕ Çар генералĕсене, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен составне Совет Союз Геройĕн ятне пани

Днепр шывĕ урлă каçас тĕлĕшпе Командовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çав ĕçре хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, генералсен, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен пысăк ушкăнне Ленин орденĕпе тата «Ылтăн Çăлтăр» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Совет Союз Геройĕн ятне мĕн пурĕ 209 çынна панă. (ТАСС).

Вăрнар лесхозĕн рабочийĕсемпе инженерла-техникла работникĕсем—Шăхасан районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем—Чăваш республикинчи вăрман касакансене, турттаракансене, вăрман хатĕрлекен предприятисен инженерла-техникла работникĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Пирĕн пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм совет халăхĕ савăнăçлă кунсем пурăнса ирттерет. Паттăр Хĕрлĕ Çар, хăйĕн Главнокомандующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, пирĕн тăван çĕре нимĕç захватчикĕсенчен тасатать, совет çыннисене вĕсен тăван хулисемпе ялĕсене таварса парать. Гитлерла йытсем кĕтĕвĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкас сехет çывхарса килет.

Пĕтĕм совет халăхĕ, Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладĕпе хавасланнăскер, фабрикăсемпе заводсенче, чугун çул çинче, колхозсенче татах та çине рех тăрса, фронтовиксемпе танлашма тăрăшса, икĕ хут, виçĕ хут вăйлăрах ĕçлет, нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме чаплă Хĕрлĕ Çара пулăшать.

Вăрнар лесхозĕ 1943 çулта çулталăкри плана срокчен пурнăçларĕ, чугун çул транспорчĕ валли 1943 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче вутă турттармалли плана 115 процент тултарчĕ, планран ирттерсе 5.000 кубометр вутă хатĕрлесе пачĕ.

Вăрман касакан стахановецсем — Николаев, Прохорова, Николаева, Волков, Михайлов, Романов, Назаров, Филиппов, Никитин юлташсем, вăрман турттаракансем — Кошкин, Илларионова, Андрианова, Трофимова, Убакова, Федорова юлташсем кулленхи нормăна 150—200 процент тултарса пычĕç.

Шăхасан районĕнчи колхозсем — «Свет», Калинин ячĕпе тăракан, «Первое мая», Чапаев ячĕпе тăракан, Тельман ячĕпе тăракан, «Заря» колхозсем чугун çул транспортне планран ирттерсе темиçе çĕр кубометр вутă хатĕрлесе пачĕç.

Сталин юлташ совет çыннисене тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма хушмасть. «Çĕнтерÿ халь çывăх,—тенĕ Сталин юлташ,—анчах та ăна алла илмешкĕн пĕтĕм тылăн çĕнĕ вăй хурса, хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр ĕçлемелле, фронтра Хĕрлĕ Çарăн пĕлсе тата татăклăн çапăçмалла».

Хаклă юлташсем, рабочисемпе работницăсем, вăрман промышленноçĕнчи инженерсемпе техниксем, Чăваш республикинчи вăрман хатĕрлес ĕçре ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем! Тăван çĕршыв пирĕн çине чыслă та ответлă задача хучĕ, —пирĕн çĕршывпа фронта оборона завочĕсем валли, фабрикăсемпе заводсем тума, çĕркăмрăк шахтисене, çавăн пекех тата нимĕç оккупанчĕсем ишнĕ хуласемпе ялсене юсаса ура çине тăратма çителĕклĕ таран вăрман материалĕсем памалла, чугун çул транспортне пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерсе тăмашкăн топливо парса тăмалла. Эпир сире кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана, чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттарса памалли плана срокчен пурнăçламашкăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас ятпа социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма чĕнетпĕр.

Эпир, Вăрнар лесхозĕн рабочийĕсемпе инженерла-техникла работникĕсем—Шăхасан районĕнчи колхозниксем—çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçламалла.

2. 1944 çулăн пĕррремĕш çур çулĕнче чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă тĕле, вутă турттармалли плана—мартăн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçламалла.

3. Вăрман хатĕрлес тата турттарас ĕçре ĕç тухăçлăхне хăпартмалла, кулленхи задание тултарман пĕр бригада та, пĕр рабочи те ан пултăр, вăрман касмалли инструментсене тата вăрман турттармалли çулсене юсавлă тытмалла.

4. Чи лайăх колхозниксене вăрман хатĕрлеме ямалла, кашни колхозран бригадирсем пулма вăрман касас тата турттарас тĕлĕшпе опытлă çынсене уйăрса хумалла, выльăх апачĕ вăхăтра илсе пырса тăмалла, вăрманта выльăх апачĕн запасĕ 20 кунлăхран кая ан пултăр.

Хаклă юлташсем—вăрман касакансем, турттаракансем, колхозниксемпе колхозницăсем! Ударлă ĕçлесе, вăрман хатĕрлесе турттаракан стахановецсен йышне ÿстерер! Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярар!

Ленин ялавĕпе, аслă Сталин ертсе пынипе малалла, çĕнĕ çĕнтерÿсем патне!

Алă пуснă: ВКП(б) Шăхасан райкомĕн секретарĕсем КУЗЬМИН, МАТВЕЕВ, Шăхасан райсовечĕн исполкомĕн председателĕ СКВОРЦОВ, Вăрнар лесхозĕн директорĕ ГРИГОРЬЕВ, Троицки ялсовечĕн председателĕ АРХИПОВ, Туçи Çармăс ялсовечĕн председателĕ ПАВЛОВ, рабочисем-стахановецсем ВОЛКОВА, НАЗАРОВ, ЕГОРОВА, РОМАНОВА, ПАВЛОВ, КОЛКИН, МОРОЗОВА, АНДРЕЕВА, ПОРФИРЬЕВА, ИЛЛАРИОНОВА, мастерсем КОЗЛОВ, ИВАНОВ, колхоз председателĕсем—Тельман ячĕпе тăракан колхозăн — ТИХОНОВ, Куйбышев ячĕпе тăракан колхозăн — ХРИСТОФОРОВ, «Пахарь» колхозăн—ГРИГОРЬЕВ, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн — МАРТЫНОВ, «Активист» колхозăн—ТИМОФЕЕВ, Молотов ячĕпе тăракан колхозăн—НИКОЛАЕВ, Киров ячĕпе тăракан колхозăн—КИЛАМЬЕВ, «Победа» колхозăн—ЗАХАРОВ, «Канаш» колхозăн — ЕФИМОВ, «Свет» колхозăн — ГЕРАСИМОВ, Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн—ХРИСАНФОВ.

Иртнё çул ўсёмсем тунă, кăçал тата лайăхрах ёçлер!

(Çёмёрле районёнчи предприятисемпе артельсен руководителёсемпе стахановецсен канашлăвёнчен)

ÇЁМЁРЛЕ. Кунта районри артельсемпе предприятисен руководителёсен, стахановецсен тата инженерно-техникла работникёсен канашлăвё пулса иртрё.

Канашлура районри артельсемпе предприятисен 1943 çулхи ёçён итогёсемпе малашнехи задачисем çинчен ВКП(б) райкомён промышленность енёпе ёçлекен секретарё Волков юлташ тунă доклада сўтсе-яврёç.

Канашлу активлăн иртрё. Тухса калаçакансем кашниех, ёçри çитменлёхсене палăртса, малашне çёршыва фронта ытларах продукци парас тёлёшпе тухăçлăрах ёçлеме пулчёç. Вёсем, Мускав хулинчи вырăнти промышленность предприятийёсен работникёсем чёнсе каланине йышăнса, хăйсем çёнё обязательствăсем илчёç.

Канашлу ёç тухăçлăхне ўстерес, продукцин пахалăхне лайăхлатас, топливăпа чёртавара перекетлес, рабочисен пурнăçпа йăла условийёсене лайăхлатас тёлёшпе татăклă ёçсем палăртрё.

Аялтарах эпир канашлура тухса калаçнă хăшпёр юлташсен сăмахёсене пичетлетпёр.

Предприятисемпе артельсене пёр тикёс ёçлеттерер

(М. Волков—ВКП(б) райкомён секретарё)

Отечественнăй аслă вăрçă вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийённе пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратрё. Çав задачăна Çёмёрле районёнчи предприятисемпе артельсенче ёçлекенсем епле пурнăçласа пычёç-ха тата халё мёнле пурнăçласа пыраççё-ха?

1943 çулта пирён районри промышленность предприятийёсем, пётёмёшпе илсен, начар мар ёçлерёç, хăйсене панă задание ăнăçлăн пурнăçларёç. 21 предприятирен 11-шё çулталăкри производство программине срокчен тултарчёç, планран иртерсе çур миллион тенкёлёх продукци кăларчёç. Район 1943 çулта 1942 çулхинчен 11 процент чухлё ытларах продукци туса кăларнă.

Ёççыннисене куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёшпе те палла улшăнусем пулса иртрёç. 1942 çулта куллен кирлё таварсем кăлармалли плана пёр предприяти те тултарайман пулсан, 1943 çулта 9 предприятирен 7-шё плана срокчен тултарчёç.

Вырăнти предприятисемпе артельсем хăйсен ёçне лайăхлатни чăн малтанах вёсен руководителёсем вăрçă вăхăтёнчи йывăрлăхсене çёнтерме вёреннинчен, кирлё вăхăтри шухăшсемпе ёçлессине сирсе янинчен килчё. Вёсем çак ыйтусене татса парас ёçре пуçарулăрах, пултарулăрах пулма пуçларёç. Предприятисенче квалификациллё рабочисем ўссе çитёнчёç.

Кайра пыракан предприятисемех, хăйсен ёçне урăхлатса çёнетнё май, иртнё çулта лайăх результатсемпе вёçлеме пултарчёç. Çапла, 1942 çулта тата 1943 çулти пёррёмёш çурçулта япăх ёçленё райпищекомбинатпа «Лесоруб» артель, 1943 çулти иккёмёш çурçулта хăйсен ёçёсене тёпренех лайăхлатса, çулталăк вёçне малта пыракан предприятисен ретне тăчёç. «Партизан» артель коллективё те пысăк улшăну турё. Вăл 1942 çулта плана 37,2 процент, 1943 çулти пёррёмёш кварталта—65,6 процент кăна тултарнă пулсан, ытти уйăхсенче плана ялан иртерсе тултарса пычё. Çапла вара иртнё çулти программăна вăл ăнăçлăн пурнăçларё.

Анчах уйрăм предприятисем халё те япăх ёçлеççё-ха. Ширшов ячёпе тăракан артель çулталăк планне пётёмпе те 80,8 процент çеç тултарчё. Мёншён? Артель правлени председателё Бажанова юлташ иккёмёш çурçулта çёнё йышши продукци тума тытăнса, пётём рабочисене çав ёçе куçарнă, ытти йышши продукци туса кăларассине маннă. Çавна пула ёнтё артель пуса тăхăнмалли япаласем тăвас енёпе плана 8,5 процент, тумтирсем юсас енёпе — 46,9 процент, культура таварёсем кăларас енёпе 18,1 процент çеç тултарнă, хăшпёр производствăсем пачах ёçлемен.

Уйрăм предприятисем плана графикпа тăрăх тултарса пыраймаççё, хăшпёр уйăхра продукци графикпа кăтартнинчен иртерсе, тепёр чухне çав тери сахал туса кăлараççё. «Обод» артель 1943 çулти пёррёмёш квартал планне 115 процент, апрель уйăхёнче—101 процент, май уйăхёнче—56, июньре—67 процент тултарнă. Çулталăк вёçне кăна продукци кăларассине хăвăрттăн ўстернё.

Пирён ёçри çитменлёхсенчен тепри вăл—плана пур ассортиментсем енёпе те пурнăçласа пыманни пулса тăрать. Райпромкомбинатăн планпа 32 тёслё продукци туса кăлармаллаччё, вăл 6 тёслё продукци кăлармалли плана çеç тултарчё. Çапла вара ёççыннисене кирлё таварсене: урапа 190 мăшăр, 16 пин кашăк, 413 пичке, 12 пин тенкёлёх тикёт, 7.500 тенкёлёх урапа маçё туса кăлараймарё.

Çакăн пек картинăна «Красный Октябрь» артельте те курмă пулать. Артель коллективё, пётёмёшпе илсен, плана иртерсе тултарнă, çав вăхăтрах тимёр-тăмăртан хуçалăхра кирлё япаласем тăвас енёпе панă заданине çуррине те тултарман.

Пирён ёççыннисене лайăх пахалăхлă продукци памалла. Кашни япала çирёп те чăтăмлă пулмалла. Анчах пирён предприятисенче часчасах япăх пахалăхлă продукци тухать. Çак çитменлёхе пирён хăвăрт пётермелле.

1944 çулта пирён умра татах пысăкрах задачăсем тăраççё. Çёршыва фронт пирёнтен ытларах та ытларах продукци ыйтаççё, ăна пирён чыслăн пурнăçламалла. Районри промышленность предприятийёсен кăçал иртнё çулхинчен ытларах продукци туса кăларма тивёçлё. Çавна пурнăçлама пирён пур условисем те çителёклё, ăна пурнăçлатпăрах.

Пирён плансем

(И. Сирота—райпищекомбинат управляющийё)

Пирён комбинатри рабочисемпе работницăсем, иртнё çулта çёршыва фронта ытларах продукци парас шухăшпа кăмăлпа ёçлесе, хуçалăх çулне начар мар вёçлерёç. Комбинат çулталăк планне 133 процент тултарчё. Кунпа пёрлех пирён коллектив вырăнти чёртаварпа усă курса çёнё производствăсем организацилерё. Сăмахран, кăвас, сăра тунă хыççăн юлнă отходпа тата пылпа спиртсырец, кăшманран варени тума пуçланă тата «С» витамин тума тытăннă.

Эпир хальхи вăхăтра сăра, квас çеç мар, лайăх пахалăхлă эрех те, конфет, патка тата ытти çимелли япаласем кăларма пултаратпăр, вёсем валли чёртавар çителёклё.

Комбинатри рабочисем мёнпур вăя фронта пулăшнă çёре пама тăрăшаççё. Вёсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Нумаях та пулмасть эпир Мускав хулинчи вырăнти промышленность работникёсен чёнёвне сўтсе-луврăмăр. Коллектив, Пётём Союзри ăмăртăва хутшăнса, хăй çине татăклă обязательствăсем илчё. Эпир 1944 çулхи производство программине ноябрён 1-мёшё тёлне тултарма, чёртаварсем вырăнтах тупса хатёрлеме пулатпăр. Ку енёпе 50 гектар çёр çине пахча-çимёçсем лартатпăр, выльăх-чёрлёхсен тата хур-кайăксен хисепне планпа палăртнинчен 50 процент чухлё ўстерме, пулă тытмалли хуçалăх организацилеме, вырăнти пуянлăхпа (хурăн-вёрене сёткенёпе, çырласемпе, йёкелсемпе) туллин усă курма пулатпăр.

Кусемсёр пуçне эпир ёç тухăçлăхне, планпа палăртнинчен 10 процент хăпартма, çёнёрен 4 йышши продукци туса кăларакан производствăсем организацилеме, стахановецсен хисепне 75 процента çитерме пулатпăр.

Фронтовиксемпе танлашма тăрăшатăп

(Монахина—„Индпошив“ артельти стахановка)

Эпё производствăра çулталăк анчах ёçлетёп-ха. Артеле киличчен манăн нимёнле професси те пулман. Мана вара мастер вёрентме тытăнчё.

Кёске вăхăт хушшинчех эпё çёвё ёçне вёренсе çитрём. Каярахпа мана дирекци хам тёллён ёçлеме куçарчё. Кун хыççăн вара эпё татах та пысăкрах хастарлăхпа ёçлеме тытăнтăм, часах нормăна та иртерсе тултарма пуçларăм.

Халё эпё квалификациллё работница, нормăна куллен 180 процент тултаратăп. Анчах çапах хамăн ёçе çителёксёр тесе шутлатăп. Вёт эпир халё кашниех икшер çыншăн ёçлеме тивёçлё, фронтовиксем пек пулмалла. Çавăнпа та эпё кăçал нормăна 200 процентран кая мар тултарса ёçлеме, продукцие отлично пахалăхпа туса кăларма тата пёр çынна ёçе вёрентме обязательство илетёп.

Ют çёршывсенче

В. И. Ленина асăнса тунă пухусем

ЛОНДОН, январён 22-мёшё. (ТАСС). Чехословакин Совет Союзёпе культурăллă çыхăну тытас тёлёшпе ёçлекен обществи В. И. Ленин ячёпе пуху туса ирттернё. Пухура Чехословаки министрёсем, Чехословакин государство совечён членёсем, Чехословакин политика тата общество организацийёсен представителёсем, Чехословакин Англири çарён офицерёсемпе салтакёсем тата Совет Союзён посольствинче ёçлекен работниксем пулнă.

Чехословакин государство совечён председателё Прокоп Макса тата ытти ораторсем те Ленин идейисем хăйсен Тăван çёршывён ирёклёхёшён тата прогрессивнăй этемлёхён ёçёшён кёрешекен совет халăхёпе Хёрлё Çарăн паттăр ёçёсенче питё лайăх палăрнине кăтартса панă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ЁÇЁСЕМ

Союзниксен çарёсем Италин хёвеланăç çыранне десант антарнă

ЛОНДОН, январён 21-мёшё. (ТАСС). Официально пёлтернё тăрăх, акăлчансен крейсерёсемпе эсминецёсем, Америкăн 5-мёш армийён наступленине пулăшса, январён 18-мёшёпе 19-мёшёнче тăшманăн Гарильяно шывё хёррихчи позицийёсене пенё.

Союзниксен икё армийён фронтёнче те тăшмана малалла хёссе пынă. Вăйллă çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан Минтурно ятлă пункта илнё.

Союзниксен авиацийё тăшманăн çар объекчёсене тата уйăн çарёсем пёр çёре пухăнса тăнă вырăнсене тапăннă.

ЛОНДОН, январён 22-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçёр Африкăри çарёсен штабё официально пёлтернине парать. Çав пёлтерўре çапла каланă: союзниксен çарёсем Италин хёвеланăç çыранёсенче Римран кăнтăртарахра аннă, тенё.

ЛОНДОН, январён 22-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçёр Африкăри çарёсен штабё ятарласа панă коммюникене пёлтерет. Коммюникере çапла каланă: Америкăн Кларк генерал командир пулса ертсе пыракан 5-мёш арминчи акăлчансен тата американецсен чаçёсем январён 22-мёшёнче ирхине ирех Италин хёвеланăçёнчи çыранне, тăшманăн хальхи фронт линийёнчен темён чухлех шалти тылне пырса аннă. Тинёс çинчи тата сывлăшри çарсем çёр çинчи çарсене çапăçма пулăшса тăраççё. Тёрлёрен çарсем пёр харăс тăвакан операцисем хёвел тухас умён пуçланса кайнă. Çав самантра Америкăн 5-мёш армийёнчи союзниксен çарёсем десант суднисем çинчен анма пуçланă. Вёсем анакан вырăн çыран тăрăх темиçе миля таран тăсăлса выртать. Çак операцисенче акăлчансен ятарласа тунă отрячёсем тата американецсен кавалерисчёсем хутшăнса кёрешеççё. Италири операцисене союзниксен Вăтаçёр тинёсён вăтам пайёнчи вăйёсен командующийё—Александер генерал ертсе пырать.

ФРАНЦИН КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕЙИ ЯЧЁПЕ РУЗВЕЛЬТ ЯНА ТЕЛЕГРАММА

ЛОНДОН, январён 19-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, Францин консультаци ассамблейи ячёпе Рузвельт çакăн пек телеграмма янă: «1944 çул çёнтерў çулё пулассине, Франция тата пусмăрланă ытти çёршывсем çёнёрен ирёклёх сывлăхёпе сывлассине эпё сирёнпе пёрле ёненсе тăратăп».

АНГЛИ КОРРЕСПОНДЕНЧЁ НИМЁÇСЕМ МИР ТУМА СЁННИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, январён 16-мёшё. (ТАСС). «Санди таймс» хаçатăн Анкарари корреспонденчё çапла калать: Папен мир тума сённё тенё хыпара Вильгельмштрассе представителё Шмидт тунмă, ун чухне вăл шăла çыртса тăнă пулмалла. Корреспондент çапла çырать:

«Папен сёнмен тени тёрёс. Анчах та никам та сёнмен тени тёрёс мар. Икё уйăх каялла çавăн пек сёнўсене Турцие панă, анчах та Турци вёсене союзниксене пама килёшмен. Стокгольмпа Лиссабонра та çавăн пек сёнўсем панă. Çавăн пек сёнме Гитлер хăй хушнă тесе шутлаççё, вăл Англие, США-на тата Российăна пёр-пёринчен уйăрса яма шутласа çавăн пек хушнă.

Сёнўсен çаксем пулнă: пёррёмёшёнчен, Германия халех хăйён вăрçăччёнхи чиккисем патне чакать; иккёмёшёнчен, Германия хăй колонисем ыйтнине ёмёрлёхе каялла илет, анчах та ăна Хёвелтухăçёнче пăртак ирёк памалла; виççёмёшёнчен, Германия хăйён флочёпе подводнăй лодкисене халех çёмёрет; тăваттăмёшёнчен, çак условисене пурнăçа кёртиччен Германире хальхи режим юлать, вăл условисене, пурнăçа кёртнё хыççăн Гитлер тата нацистсен партийё хăйсене çар аллине параççё.

Çак сёнўсем нимёçсен питё вăйсăррине кăтартаççё тесе шутлама кирлё мар; вёсем — аслă маневр пулса тăраççё, вёсем Германин йывăр индустрине сиен тумасăр çăлса хăварма юлашки минутра тунă сёнўсем пулса тăраççё, Гитлер тата çар руководителёсем çав йывăр индустрин марионеткисем пулса тăраççё.

Анкарари лайăх пёлекен çынсем çапла асăрхаттараççё: Германия çитес вăрçа хатёрленет те ёнтё, вăл хăй парса тухнă танатана вăрçă [illegible] ывăнса çитнё халăх кёрсе ўкесси çине шанать».

СОФИЯ ХУЛИНЕ СЫВЛĂШРАН ПЫРСА ТАПĂННА ХЫÇÇĂН

Турцири «Танин» хаçат корреспонденчё Софирен çапла пёлтерет: болгарсен столицинче пушарсене халё те сўнтерсе пётермен. Халăха каçхине 6 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен София урамёсене тухма чарнă. Шкулсенче тата ытти учебнăй заведенисенче вёрентме пăрахнă. Хула çине бомбăсем пăрахнă хыççăн София хулин хăшпёр районёсенче вырăнти халăхпа нимёç çарёсем хушшинче тытăçусем пулса иртнё. Софисёр пуçне тата ытти пысăк хуласенчен те халăха урăх çёре куçарма йышăннă.

Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çарăн вăрçă ёçёсем

НИМЁÇСЕНЧЕН ÇИЧЁ ХУЛА ТЫТСА ИЛНЁ

ЖЕНЕВА, январён 19-мёшё. (ТАСС). Югославирен пёлтернё тăрăх, Вăтам Боснире Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çар чаçёсем Котор-Вароша çёнёрен тытса илнё, унти территорие гитлеровецсенчен, усташасенчен тата четниксенчен тасатаççё. Хёвелтухăç Боснире Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çарăн 5-мёш дивизийё Фоча хулине штурмласа тытса илнё. Фоча хули патёнче пынă çапăçусенче тата хулара хăйёнче тăшманăн 950 салтакёпе офицерне вёлерсе пётернё, аманнă е тыткăна илнё, 6 грузовик, 14 пулемет, темиçе çёр винтовка тата ытти çар пурлăхё тытса илнё. Доброполье—Снерча секторёнче çав дивизи чаçёсемех четниксен 500 çынран тăракан отрядне аркатса тăкнă.

Хёвеланăç Боснире Мрконич—Град секторёнче Гламоча еннелле хёсёнсе тухма хăтланакан нимёçсемпе хаяррăн çапăçаççё. Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çар чаçёсем тăшман çарёсем ларса пыракан 500 грузовика çавăрса илнё те тăшмана пысăк сиен кўнё. Çавăрса илнё нимёç çарёсем вёсем патне пулăшу çитсен тин пётёмёшпех нётсе ларассинчен хăтăлса тухма пултарнă. Гитлерла оккупантсем Брач утравё çине десант антарнă.

Далмацире нимёçсемпе усташасен çарёсене хирёç хаяррăн çапăçаççё. Гитлеровецсем çёнё вăйсем илсе пырса, вёсене Госпиче, Грачаце ятлă пунктсенче тата ытти вырăнсенче те пёр чăмăр туса пухаççё.

ЖЕНЕВА, январён 21-мёшё. (ТАСС). Югославирен пёлтернё тăрăх, Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çар чаçёсем Мрконич—Град—Гламоч секторёнче çаплах хаяррăн çапăçаççё. Тăшмана питё пысăк çухатусем кўнё. Кунта нимёçсен дивизийё çак икё хула хушшинчи çула тытса илнё пулнă.

Хёвелтухăç Боснире Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çар чаçёсем Добой—Тузла—Зворник секторёнче ăнăçлăн çапăçаççё.

Герцеговинăра Невесиня сывăхёнче пулса иртнё çапăçусенче Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çар чаçёсем гитлеровецсемпе четниксенне 300 салтакёпе офицерне яхăн пётерсе тăкнă. Вилнисем хушшинче четниксен бригадин командирё тата виçё батальон командирёсем пур.

Огулин—Карловац секторёнче нимёçсен пёр полкне çёмёрсе тăкнă.

Вăтам Боснире Травник сывăхёнчи фронтра, Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çарăн икё бригади, тăшман çавăрса илнё ункăран тухса, нимёçсен 300 оккупантне ытла пётерсе тăкнă тата нумайёшне амантнă.

ЛОНДОН, январён 23-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, Югославири халăха ирёке кăларассишён кёрешекен çарăн войскисем, сарлака фронт тăрăхёнче çапăçса, юлашки виçё кун хушшинче çичё хула тыса илнё. Гитлерла çарсен Врбас шывён айлăмё тăрăх (Босния) пыракан линине татнă. (Çак позицисенчен Гитлер çарёсем партизансене хирёç хăйсен улттăмёш наступленине пуçласа янă пулнă). Яйце хулисёр пуçне çак хуласене тытса илнё: Празор (Хёвеланăç Босния), Фоча (Кăнтăр-хёвелтухăç Босния), Босна шывё çинчи Самач, Тузлапа Брод хушшинчи Градачао, Модрич (çав районрах) тата Крека (Тузларан кăнтăртарахра). Партизансем Тузла хулине хытăрах хёссе пыма пуçланă. Çавăн пекех тата партизансем Шламочпа Яйце хушшинчи çула 5 километр тăршшёнчи укастокра тытса илни çинчен пёлтереççё.

АНГЛИ АВИАЦИЙЁ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, январён 21-мёшё. (ТАСС). Авиаци министерстви пёлтернё тăрăх, январён 21-мёшё ыран тенё чух çёрле акăлчансен бамбардировщикёсем Берлина çёнёрен вăйлăн тапăннă. Вăйлă пушарсем тухнă. «Москито» йышши самолетсем Çурçёр-Хёвеланăç Германири чылай объектсене атакăланă, тăшман шывёсенче минăсем хурса тухнă.

Çак мёнпур операцисенчен хăйсен базисене акăлчансен 35 самолечё таврăнман.

Ёнер кăнтăрла çыранри оборона самолёчёсем Норвеги çыранёсем патёнче нимёçсен суту-илў суднисене атакăланă. Сыхласа пыракан темиçе карапа тата виçё суту-илў суднине сиенленё.

Вырăнти удобренисене пухассине тата вёсемпе усă курассине тёрёс йёркелер

Удобренисем тырă тухăçне ўстерес çёрте мёнле вырăн йышăннине пуринчен те паллă. Тислёкпе пёлсе усă курни пёр çулталăк хушшинче тырă тухăçлăхне икё хута çити ўстерме пултарать. Унăн усси темиçе çула пырать. Гектар çине 20 тонна тислёк тăкни 20 центнер тырă хушса парать. Çёрулми лартмалли вырăна тислёк тăкни те усăллă. Вăрмар районёнчи «Большевик» колхоз тислёк тăкман вырăнтан 67,8 центнер, тислёк тăкнă вырăнтан 141 центнер çёрулми илнё. Гектар çине 20 тонна тислёк тăкни çёрулми тухăçне гектартан 50 центнер хăпартнă. Тислёкпе минераллă удобрени хутшăнтарса тăксан тата лайăхрах тухăç пулать.

Удобренисемпе анлăн усă курнипе Вăрнар районёнчи Ленин орденлё Сталин ячёпе тăракан колхоз çулран çул пысăк тухăçлă тырă туса илет. 1940 çулта хăйсен ёçёсен итогёсене туса, колхоза ертсе пыракансем çапла çырчёç: «Хамăрăн начар çёр çине эпир тёрлё удобренисем тăкман пулсан, нихăçан та пысăк тухăçлă тырпул туса илеймен пулăттăмăрччё. Пысăк тухăçлă тырпул туса илни пётёмпех тислёк тăкнинчен килет» терёç. Вёсем колхоз тата колхозниксен хуçалăхёнчи тислёкне, кайăк-кёшёк тислёкёпе тата кёлпе усă курнипе анчах çаранса тăмаççё. Торфпа, çырма юшкăнёпе тата минераллă удобренисемпе: фосфорит çăнахёпе, суперфосфатпа, кали тăварёпе, сернокислый амонипе тата ыттисемпе те анлăн усă кураççё.

Элёк районёнчи Жданов ячёпе тăракан колхозра та вырăнти удобренисемпе анлăн усă кураççё. Çак колхоз, юнашар колхозсемпе танлаштарсан, кашни çулах пысăкрах тухăçлă тырă пухса илет. 1942 çулта тёштырă вăтамран пёр гектартан 14 центнер, пăрça 23,2 центнер, пăри 27 центнер, çёрулми 165 центнер пухса илнё. Çак колхозра япăх çёр çинче те пысăк тухăçлă тырă туса илни, чăн малтанах тёрлё удобренисемпе çёре анлăн çемёçтернинчен килет. Колхозăн çёрё 229 гектар, 1943 çулта колхоз хăйён кирне 4.117 лав тислёк тăкнă, 183 лав фекали, 53 центнер кёл, 16 центнер ытла кайăк-кёшёк тислёкё, 37 центнер фосфорит çăнахё. Урăхла каласан кашни гектар çине вăтамран 91 лав тислёк, икё центнер минераллă удобрени, 4 центнер фекали тата 0,4 центнер кайăк-кёшёк тислёкё тăкнă. Фекалипе кунта компост тунă çёрте усă курнă. Уя тарăнах мар 4 шăтăк алтнă, вăл шăтăксене кивё улăмсем тултарнă, ун çине вара фекалипе тислёк шёвекне янă. Шăтăка тултарсан, ăна çиелтен каллех улăмпа витнё. Çулталăк иртсен çак çёрнё япалана уя тăкнă. Лайăх пахалăхлă тислёк тăвас тесе, ку колхозра тислёк усрамалли вырăнсене ятарласах тунă: пёрне лаша вити çывăхне, тепёрне выльăхсен карти çывăхне, çырма хёррине тунă. Кунта пёве юшкăнёсемпе те анлăн усă кураççё. Колхозра пурё 7 пёве, вёсем пысăках мар, хăшпёрисенче пулă та пур. Çулталăкра, пёр пёвине татса, шывне юхтарса яраççё те, ларса юлнă юшкăна уя турттараççё. Колхозри пусă çавăрăнăшё çинче хирлё, çавăнпа та ытти удобренисемпе пёрле пёве юшкăнне пёр хир çине кашни çулах кăларма май пур.

Шупашкар районёнчи Молотов ячёпе тăракан колхозра та вырăнти удобренисемпе усă курни çинчен чарăнса тăма пулать. Колхозăн çёрё тăмлă тата кёл пек тăпраллă. Çапла пулсан та колхоз кашни çулах пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Колхоз уя хăйён тата колхозниксен хуçалăхёнчи тислёке кăна мар, Шупашкар хулинчен те турттарать. Кунта кайăк-кёшёк тислёкне тата кёле те тăрăшса пухаççё. Колхозра 97 хуçалăх, çапла вара 100 центнера яхăн кёл пухăнать. Кашни çулах çёртме хирне пёр гектар çине 20—25 тонна тислёк тата 5—6 центнер фосфорит çăнахё тăкаççё.

Вăрнар районёнчи Молотов ячёпе тăракан колхозра торфпа пёлсе усă кураççё. Çёрё колхозăн хăйăрлă. 1937 çулччен тырă кунта начар пулнă. Хире торф нумай тăкнине пула, колхоз кашни гектартан вăтамран 17,6 центнер тёштырă пухса илнё. Сёлё акмалли вырăна кашни гектар çине 40 тонна торф тăкнă. Сёлё калчисене амиачнăй селитрăпа тăрантарнă. Çакăн хыççăн вара сёлё тухăçё кашни гектартан 26,2 центнера çитнё. Торф тăкнă вырăнтан кашни гектартан 22 центнер кёрхи тулă пухса илнё.

Çёрпў районёнчи «Ёмёт» колхозра, Куславкка районёнчи «Динамо» тата «Правда» колхозсенче те вырăнти удобренисемпе пёлсе усă кураççё. Çавна пула асăннă колхозсенче тырă тухăçлăхё çулран çул хăпарса пырать.

Анчах та республикăри хăшпёр колхозсем вырăнти удобренисемпе кирлё пек усă курмаççё-ха. Сăмахран, Вăрнар районёнчи Аслă Упакассинчи колхозах илер, кунта вырăнти удобренисене пухмаççё, вёсемпе усă курмаççё, çавăнпа та çак колхоз гектартан 5—6 центнер кăна тёштырă пухса илет.

Куславкка районёнчи Пилешкасси тата Мужарти колхозсем яланах сахал тырă туса илеççё. Ку вăл, вырăнти удобренисене пухманнинчен тата вёсемпе усă курманнинчен килет. Уя турттарса тухнă тислёксем те кунта темиçе çулшар усă курмасăр выртса, хăйсен пахалăхне çухатаççё.

Шăмăршă районёнчи «Светлый путь» колхоз 1941 çултах уя 800 лав тислёк кăларнă, вăл ёнтё виçё çул хушши купара выртать. Колхоз правленийё вара кашни çулах райçёрёç пайне 800 лав тислёк кăларнă тесе сведени парать. Кама улталаççё-ха çак колхоза ертсе пыракансем? Паллах, хăйсене хăйсем улталаççё.

Вырăнти удобренисене хакламаннине халё, уйрăмах вăрçă пынă вăхăтра, чăтма çук. Çёршыва фронта тёштырă, пахча-çимёç тата ытти ялхуçалăх продукчёсем ытларах кирлё. Çавăнпа та ёнтё вырăнти удобренисемпе анлăрах усă курмалла. Тырă тухăçлăхне кăçалхи çулах ўстерес тесен, чăн малтанах вырăнти удобренисене хакламз пёлмелле тата вёсемпе агротехника каланă пек усă курмалла, тислёк ытларах тума тăрăшмалла. Мёнле майсем пур-ха ăна тума? Чăн малтанах выльăхсен айне ытларах улăм, торф сармалла. Тислёке сыхлама пёлмелле, ăна шăнма е типме памалла мар. Тислёк шёвекне, уйрăмах çуркунне, юхса каясран сыхламалла. Торф тата юшкăн кăларма тытăнмалла, çак ёçе тума ятарласах бригадăсем тумалла. ВКП(б) Чăваш Обкомён XVII пленумё йышăннă тăрăх, кашни колхоз лашасенчен 30 процентне тата кўлме вёрентнё мăйракаллă выльăхсене пётёмпех тислёк турттарма уйăрмалла. Сывăхри хуласенчен, фабрик-заводсенчен, шкулсенчен, больницăсенчен тислёк, кёл, фекали турттарма тытăнмалла.

Кашни колхозникпе колхозница тăван çёршыва, хамăрăн паттăр Хёрлё Çара пур майсемпе те пулăшас кăмăлпа пурăнать. Хёрлё Çар тăшмана хăвăртрах аркатса тăктăр тесен, тăван çёршыва нимёç захватчикёсенчен хăвăртрах тасатас тесен, пысăк тухăçлă тырпул туса илни кирлё. Çавăнпа та вырăнти удобренисемпе анлăн усă курар. Вырăнти удобренисене хатёрлесе уя кăлармалли уйăхлăха пурте хастарлăн хутшăнар, уйăхлăха ăнăçлăн ирттерессишён социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярар.

Н. НИКИТИН,
Чăваш АССР Çёрёç Халăх Комиссариачён агрономё.

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителён — 4—26, парти пурнăç пайён — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайёсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00016 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.